Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 МАЙ 12 КĔÇНЕРНИКУН

107 (4920) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухат

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомăн хаçачĕ

Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактăрăн 0—67, Ред. заместителĕн 0—88, Редакци секретарĕн 4—40, Дежурнăйăн 6—23

Пĕтĕм Союзри Йалхуçалăх выставкине тивĕçлипе хатĕрленер

Августăн 1-мĕшĕ — Пĕтĕм Союзри Йалхуçалăх выставки уçăлнă кун—пирĕн социалисăмла çĕршывăн историнче чи паллă кунсенчен пĕри пулса тăрат. Пирĕн выставкă хăйĕн ăшчикки тĕлĕшĕнчен капиталисла çĕршывсенчи выставкăсенчен пачах урăхла. Пирĕн выставкă вăл — социалисăмла йалхуçалăхĕ тупă çĕнтерӳвĕн чаплă демонстрацийĕ пулса тăрат. Ленин — Сталин партийĕ йертсе пынипе çĕнтерсе илнĕ телейлĕ те хавасла колхозла пурнăçа выставкă пĕтĕм çĕнче умĕнче уççăн кăтартса парĕ.

Пĕтĕм Союзри йалхуçалăх выставкине пулма права илес тесе вăйлă тырпулшăн, йышлă, тухăçлă выльăх чĕрлĕхшĕн большевикла кĕрешсе пырса, Чăваш республикинче малта пыракан колхозсем, бригадăсемпе звеносем, машинă-трактăрлă станцисем иртнĕ çулта пит пысăк çитĕнӳсем турĕç. Республикипе 1688 колхозран 713 колхоз выставкăра пулма тивĕçлĕ пулчĕç. Республикипе вăтам шутпа гектартан 15,6 центнĕр тапан тĕштырă илни—пĕтĕм Чăваш республикине выставкăра пулма тивĕçлĕх парĕ. Çавăн пек пысăк та чыслă хисепе илнĕ республикă ССР Союзĕнче урăх çук. Ку вăл халăх тăшманĕсене—троцкиссене, бухаринцăсене, буржуалă националиссене, кулаксене тата ыттисене пĕтерсе тунă çĕнĕрен чечекленсе ӳсекен социалисăмла йалхуçалăх çĕнтерĕвĕ. Ку вăл пирĕн республикăри колхозниксен аплăран та чаплă, историлĕ çĕнтерĕвĕ. Çав çĕнтерӳ кашни колхознике хавхалантарат, çĕнĕ çитĕнӳсем тума чĕнет.

Пĕтĕм Союзри йалхуçалăх выставкин комитечĕ Чăваш республики тăрăх тĕштырăсем йенĕпе пурĕ 523 колхоза выставкăра пулма çирĕплетнĕ. Унсăр пуçне выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç йенĕпе — 37 колхоз, уйрăм культурăсем йенĕпе 153 колхоз, 2 МТС, 25 трактăрис, 6 агроном тата йалхуçалăх ĕçĕнче малта пыракансене 12 çынна çирĕплетнĕ. Выставкăра пулма çирĕплетни колхозниксене çĕнĕ çĕнтерӳсем тăвас ĕçре, 1938 ç. татах та вăйлăрах тырпул туса илес ĕçре çĕнĕ вăй парса хавасланттарат.

Турханти „Çĕнĕ хунав" колхоза (Ишлей р.) Пĕтĕм Союзри выставкăра пулма çирĕплетни çинчен шĕлсенех, колхоза бригадăпа бригадă, звенопа звено, колхозникпа колхозник хушшинче социалисăмла ăмăртса ĕçлессине татах та вăйлатса йанă.

Елĕк районĕнчи „Труд" колхозра, колхоза выставкăра пулма çирĕплетнĕ хыççăн, колхозниксем 1938 çул валли хăйсем çине çĕнĕ обйазательствăсем илсе пурнăçа кĕртме пулчĕç. — Иртнĕ çулта пĕр ĕçкунĕ пуçне, 7,5-шар килограм тырă валеçнĕ пулсан, кăçал лайăхрах ĕçлесе, пырса гектартан 120 пăтран кайа мар тырă илсе, ĕçкунĕ пуçне 8—9-шар килограм валеçмеле тума пулатпăр,—тесе çыраççĕ „Труд" колхоз членĕсем.

Урăвăшри „Майăн 1-мĕшĕ" колхозра (Вăрнар р.) выставкăра пулма панă вырăна аларан вĕçертес мар тесе çураки ĕçне пысăк пахалăхпа туса иртерне.

Выставкăра пулма вырăн пани колхозшăн, бригадăшăн, машинă-трактăрлă станцишĕн, районшăн пит пысăк хисеп. Выставкăра пулма тивĕçлĕх илнисем мĕн таран ытларах, районшăн, республикăшăн çавăн чухлĕ чыслăх пысăкрах. Республикипе 1688 колхозран 713 колхоза вырăн пани вăл сахал мар. Анчах вăл пирĕншĕн çителĕксĕр. Тырпул тухăçлăхĕ тата выльăх-чĕрлĕх ĕçĕ йенĕпе выставкăра пулма пултаракан колхозсем пирĕн вăл хисепрен чылай ытларах.

Калас пулат, пирĕн Çĕрĕç органĕсене кĕрсе ларнă халăх тăшманĕсемпе вĕсене пулăшса тăракансем колхозсен çитĕнӳвĕсене выставкăра кăтартмала тăвас ĕçе тĕрлĕ майсемпе чăрмантарса пынă. Чăваш Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн кивĕ аппарачĕ Пĕтĕм Союзри Йалхуçалăх выставкине хатĕрленес ыйтусем тĕлĕшпе нимĕн те туман.

Районсенче те хăшпĕрисем выставкăна хатĕрленес ĕçе тивĕçлипе хакламан. Тутаркас районĕнче тырпул тухăçĕ йенĕпе илсен, 90 колхоз выставкăра пулма тивĕçлĕ. Анчах Çĕрĕç пайĕ В. Кангин йулташ 50 колхоз валли çеç документсене йĕркелесе панă. Йĕпреç районĕнче 65 колхозран 22 колхоз валли, Трак районĕнче 45 колхозран 17 колхоз валли çеç документсене йĕркелесе панă.

Чылай çĕрте тата хăшпĕр колхозсен йе вăйлă тырпул маçтăрĕсен лайăх ĕçĕсене палăртмасăр хăварнă. Шупашкар районĕнчи „Осоавиахим" колхозра 1937 çулта 6 гектар çинчен кашнинчен 3,51-шар центнĕр клевĕр вăрлăхĕ илнĕ. Çĕрĕç пайĕ çавна палăртман. „Страж революции" колхозра (Тутаркас р.) пахчаçимĕç бригадирĕ Попов йулташ иртнĕ çулта гектартан 1000-шер центнĕр тымарçимĕç туса илнĕ, çакăн пек тĕслĕхсем татах та пур. Çĕрĕç пайĕсен çавăн пăхăçусăрлăхĕ пирки нумай колхозсемпе колхозниксем выставкăра пулмасăрах йулаççĕ.

Выставкăра пулма çирĕплетнĕ колхозсен йалхуçалăх культурисен експоначĕсене май уйăхĕн йулашки кунĕсенче выставкăна йама тытăнмала пулат. Çавăнпа та експонатсене пайан-ыранах тĕплĕн, инструкци çинче кăтартнă пек хатĕрлесе хумала. Анчах та, калас пулат, хăшпĕр колхозсенче експонатсене йапăх пухса усраççĕ. Шупашкар районĕнчи „Осоавиахим" колхозра уйăрса хунă експонатсене тирпейлĕ усраман пирки пăсăлса пĕтнĕ. Шăхасан районĕнчи Атнашри Кирăв йачĕпе тăракан колхозра тĕштырă експоначĕсене шăшисем тĕшĕлесе пĕтернĕ.

Йалхуçалăх выставкинче пулма тивĕçлĕх илмели услови тăрăх, выставкăра пулакансен 1937 çулхи ĕç результачĕсем йенĕпе çеç мар, 1938 çулта та 1937 çултинчен кайа мар результатсем памала. 1937 çулта тырпул тухăçлăхĕ йенĕпе колхоз выставкăра пулма тивĕçлĕх илнĕ пулсан, анчах та 1938 çулта тухăç гектартан 15 центнĕртан кайа илсен, çав колхоз вара выставкăра пулма çирĕплетнĕ списокран намăслăн тухса ӳкет. Выставкăра пулма çирĕплетнĕ колхозсен кăçал иртнĕ çулхинчен тата вăйлăрах тухăç илмеле.

Республикă кăçал Тутар тата Мордва республикисемпе социалисăмла ăмăртса ĕçлет. Виçĕ республикă ăмăртуне тĕп вырăна хурса, кашни колхозăн, бригадăн, кашни районăн мала тухассишĕн кĕрешмеле. Выставкăра пулма çирĕплетнĕ колхозсенче социалисăмла ăмăрту уйрăмăнах вăйлă пулмала. Çавăнпа пĕрлех, çав колхозсен хăйсен лайăх опычĕсене ытти кӳршĕри колхозсене хăйсем пек лайăх ĕçлеме пулăшмала.

Выставкăна организацилĕн кĕтсе илес тĕлĕшпе тумалли ĕçсем татах та нумай-ха. Експонатсене хатĕрлесе хунă, документсене йĕркеленĕ, анчах чылай колхозсем малашне мĕн-мĕн тумали çинчен тĕплĕн пĕлмеççĕ. Республикăри Выставкă Комитечĕн выставкăра пулма çирĕплетнĕ колхозсене малашнехи ĕçре конкретлă пулăшу парса пымала. ПСК(б)П Обкомĕн йалхуçалăх пайĕпе Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн çав колхозсене республикăра йе районăн-районăн пухса канашлусем туса иртерни кирлĕ.

Пирĕн парти, пирĕн правительствă тата пирĕн çулпуç Сталин йулташ колхозсене йалан пулăшса пыраççĕ, колхозниксен пурнăçне лайăхлатма тăрăшаççĕ. Йалхуçалăхĕнче çĕнĕ çĕнтерӳ тума партипе правительствă пурне те туса пачĕç. Пĕтĕм ĕç халь ĕнтĕ колхозниксенчен хăйсенчен, ĕç хăвăртлăхĕпе пахалăхĕнчен килет.

Социалисăмла ăмăртăва анлăн сарса йарар!

Пĕтĕм Союзри Йалхуçалăх выставкине социалисăмла йалхуçалăхĕнче çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илер!

Туркмен СС Республикĕ Ашхабадри суйлав умĕнхи пухусенче

Пухусенче Туркмен СС Республикĕн Верховнăй Совет депутатне суйлама кандидата И. В. Сталин, М. И. Калинин, К. Й. Ворошилăв, Н. И. Йежов, А. А. Андрейĕв, А. В. Косарĕв, А. Худайбергенăв, А. А. Дурдыйĕв, Х. Исмайлăв, В. А. Йусин, А. К. Гельдыйĕв йулташсене тăратнă

АШХАБАД, майăн 9-мĕш. (ТАСС). Ашхабадри туркменсен педагогикăпа учителсен институтĕнчи тата хĕрарăмсен педагогикă училищинчи студентсен, преподавательсемпе служăщисен суйлав умĕнхи пухăвĕ калама çук пысăк çĕкленӳпе пулса иртнĕ (пухура пурĕ 500 çын пулнă). Педагогикă институчĕн истори факультетĕнчи декан Шевцов йулташ Туркмен СС Республикĕн Верховнăй Совет депутатне суйлама кандидата Иосиф Виссарионăвич Сталина тăратма сĕнсен, унăн сĕнĕвне тăвăллăн алă çупнипе тата „Сывă пулăр аслă СТАЛИН!" тесе саламласа кăшкăрнипе йышăннă. Çавăн пекех пуху пурте пĕр шухăшлăн пулнипе республикĕн Верховнăй Совет депутатне суйлама кандидата Туркмен СС Республикĕн Çутĕç Халăх Комиссарне А. К. Гельдыйĕв йулташа тăратнă.

Туркменсен государствă медицинă институтĕнчи студентсемпе преподавательсен суйлав умĕнхи пухăвĕнче (Клиническ суйлав округĕ № 43) республикĕн Верховнăй Совет депутатне суйлама кандидата М. И. Калинин, А. А. Андрейĕв, Н. И. Йежов йулташсене тата институтăн вĕренӳ пайĕн пуçлăхне В. А. Йусин профессăра тăратнă.

Ашхайуадск аулсоветĕнчи Ворошилăв йачĕпе тăракан ертел колхозникĕсемпе колхозницисем 100 çын ытла колхоз шкулне суйлав умĕнхи пухăва пуçтараннă. Пухура Туркмен СС Республикĕн Верховнăй Совет депутатне суйлама кандидатсене К. Й. Ворошилăв, Н. И. Йежов, А. В. Косарĕв йулташсене, Туркменири К(б)П Тĕпком çекретарне Й. А. Чубина, Туркмен ССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председательне А. Худайбергенăва, Туркменири çамрăксен Ленинла Коммунисла союзĕн Тĕпком çекретарне А. А. Дурдыйĕва тата Ашхабад районĕçтăвком председательне Х. Исмайлăва тăратнă.

1938 çулти Майăн 1-мĕшĕ Мускавра

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: И. В. Сталин, В. М. Молăтăв тата М. И. Калинин йулташсем мавзолей трибуни çинче.

Ф. Кислов фото-ӳкерчĕкĕ (Союзфото).

Аджари АСС Республикĕнче округсенчи суйлав умĕнхи канашлусем пуçланнă

Майăн 9-мĕшĕнче Аджари АСС Республикĕнче Грузин СС Республикĕн Верховнăй Совет депутатне кандидатсем тăратас тĕлĕшпе округсенчи суйлав умĕнхи канашлусем пуçланнă.

Батуми—Ленинск суйлав округĕнчи суйлав умĕнхи округри канашлу пĕр шухăшлăн Грузин СС Республикĕн Верховнăй Совет депутатне суйлама кандидатсене Сталин, Йежов, Берийа йулташсене тата Грузи К(б)П Аджари обкомĕн çекретарне Таплашвили йулташа палăртнă.

Канашлу Сталин, Йежов, Берийа тата Таплашвили йулташсенчен вĕсене Батуми—Ленинск суйлав округĕ тăрăх баллотировкăна тăма ыйтнă.

Канашлу вунвиçĕ доверённăй суйласа хăварнă.

(ТАСС).

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Советĕнче

Майăн 8-мĕшĕнче ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн черетлĕ ларăвĕ пулса иртнĕ. Ларăва В. М. Молăтăв йулташ йертсе пынă.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ ăслăлăхсен академийĕн 1938 çулта тумали тĕп ĕçĕсем çинчен ССР Союзĕн ăслăлăхсен академи президенчĕ В. Л. Комаров пĕлтернине тата академин ăслăлăх пайĕсен çекретарĕсем пĕлтернине: техникăла ăслăлăхсен—академик Брицке, йестествознанипе математикă ăслăлăхĕсен — академик Ферсман тата общĕствăлă ăслăлăхсен пайĕнчен — академик Грекăв пĕлтернине итленĕ. Çав пĕлтерӳсен тĕп тĕллевĕ ăслăлăхсен академийĕн 1938 çулта тумали ĕç планĕнчи тĕп ыйтусене çутатса парасси пулнă.

ССР Союзĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн 1933 çулхи декабĕрĕн 14-мĕшĕнче ăслăлăхсен академине ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ аллине парасси çинчен йышăннă постановленинче те тата академийĕн уставĕнче те çапла палăртса каланă: ăслăлăхсен академийĕн тĕп ĕçĕ ăслăлăх çитĕнĕвĕсемпе йĕркелĕн усă курса социалисăмлă общĕствăлă строительствине пулăшса пырасси пулса тăрат. Академийĕн ĕç планĕ çав решенисемпе килĕшӳлĕн пулмала та ĕнтĕ.

Ăслăлăхсен академийĕн представителĕсен çав çӳлерех асăннă пĕлтерĕвĕсем тăрăх пулнă хĕрӳлĕ прениссене Кафтанăв, Л. М. Каганович, Ленин йачĕпе тăракан йалхуçалăх академийĕн президенчĕ Т. Д. Лысенко, академик Кржижановский, Вознесенский. Молăтăв йулташсем хутшăннă.

Тухса каланисем ăслăлăхсен академийĕн ĕçĕнчи çитĕнӳсене палăртнă, çавăн пекех тата унăн ĕçĕ çинчен критиклесе те сахал мар каланă. Ăслăлăхсен академийĕн техникăлă пайĕ те хăйĕн ĕçне социалисăм строительствин практикăлă ĕçĕпе çыхăнтарайман. Ăслăлăхсен академийĕн хăшпĕр институчĕсенче суйа-ăслăлăх вырăн йышăннă, çав суйа-ăслăлăх представителĕсене кирлĕ отпор пани çук-ха.

Тĕплĕн сӳтсе-йавнă хыççăн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ чылай решенисем йышăннă.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ ССР Союзĕн ăслăлăхсен академийĕн 1938 çулхи ĕç планне халлĕхе çирĕплетес мар тесе йышăннă, академине çав плана малтан академин пĕрлехи пухăвĕнче сӳтсе-йавма хушнă.

Ăслăлăхсен академийĕн 1938 çулхи ăслăлăх експедицисен планне пăхса тухма, йатăрласа комисси уйăрнă.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ ăслăлăхсен академийĕн техникăлă пайне хуçалăхлă организацисен ĕçĕнче ăслăлăх тĕлĕшпе тупă техникăлă çитĕнӳсене пурнăçа мĕнле кĕртсе пынине тата вĕсемпе практикăлă ĕçре мĕнле усă курнине сăнаса пыма хушнă.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕ ăслăлăхсен академийĕн составне çĕнĕ ăслăлăх вăйĕсене, вăл шутра çамрăксенчен тухнă ăслăлăх вăйĕсене хушма кирлĕ тесе йышăннă.

Кунсăр пуçне, Халăх Комиссарĕсен Совечĕ академийĕн президиумне çĕнĕ вăйсем хушма, çавăн пекех тата ăслăлăхсен академийĕн пур ăслăлăх пайĕсен йертсе пыракан органĕсене те: техникăлă ăслăлăхсен пайне, йестествознанипе математикă ăслăлăхĕсен пайне тата общĕствăлă ăслăлăхсен пайне çĕнĕ вăйсем хушма кирлĕ тесе йышăннă.

Унтан ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ автомобил промышленнăçĕнчи ĕç укçине организацилессине лайăхлатас ыйтăва пăхса тухнă. Ку ыйту тăрăх машиностройени Халăх Комиссарĕн Брускин йулташăн докладне итленĕ.

Автомобил савăчĕсенче халĕхи вăхăтра ĕç укçи çистеминче чылай пысăк çитменлĕхсем пур.

Савăтсенче ĕç укçине нумай тĕрлĕ тарифсемпе тӳлеççĕ. Сталин йачĕпе тăракан савăтра хĕрĕх тĕрлĕ хак, Горькинчи Молăтăв йачĕпе тăракан савăтра—çирĕм икĕ тĕрлĕ хак. Çаксем ĕç укçи çистемине йăвăрлатса, ăна пăтраштарса йараççĕ, рабочисемшĕн ăнланса илме йăвăр туса хураççĕ тата ĕç укçине тĕрĕс шутласа парас çĕрте контроль туса пырассине йăвăрлатаççĕ.

Автомобил савăчĕсенче вĕрн тата вĕри мар цехсенче ĕçлекен рабочисене ĕç укçи тӳлес çĕрте уравнилăвкă пур, сехет тăрăх ĕçлекенсене тата сдельнăй ĕçлекенсене ĕçшĕн тӳлессинче килĕшмеле мар уйрăмлăх пур, час-часах пысăк квалификацилĕ ĕçсенче ĕçлекенсене сахал квалификацилĕ ĕçсенче ĕçлекенсенчен кайа тӳлеççĕ. Прогрессивлă сдельнăй ĕç укçи çистеми тĕлĕшпе ĕç начар тăрат: сăмахран, Сталин йачĕпе тăракан савăтра сдельнăй ĕçлекен 18 пин те 800 рабочирен çав çистемă тăрăх 100 рабочине йахăн çеç тӳлеççĕ. Преми парас çистемăна пысăккăн ĕçе кĕртсе пыраççĕ, вăл çистемă ĕç укçине хăй тĕллĕн çеç ӳстерсе пырат тата ĕç тухăçне ӳстерме пулăшмаст.

Цехсенчи инженерлă-техниклă работниксемпе рабочисене ĕç укçи тӳлес çĕрте тĕрĕс мар виçе пур, маçтăрсен ĕç укçисем çав ĕçре ĕçлекен рабочисен ĕç укçинчен те кайарах.

Çаксене пула кадрсем улшăнса тăраççĕ, çавсем ĕç тухăçне ӳстерессишĕн тата бракçене пĕтерессишĕн кĕрешме кансĕрлесе пыраççĕ, стахановла йухăма сарма чăрмантараççĕ.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ асăннă çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе тата автомобил савăчĕсенче ĕç укçи тӳлес çистемăна йĕркелес тĕлĕшпе машиностройени Халăх Комиссариачĕ тума палăртнă ĕçсене тĕпрен илсе ырланă.

(ТАСС).

Узбек СС Республикĕсенчи суйлав умĕнхи пухусенче

Узбекистанра суйлав умĕнхи пухусем пысăк çĕкленӳпе иртеççĕ. Андижанри çĕр мамăк тасатакан 2-мĕш №-лĕ савăтри, Бухарă районĕнчи, Кенжи—Калининск йалсоветĕнчи „Коммунист" тата „Ленинизм" колхозсенчи колхозниксемпе колхозницăсен суйлав умĕнхи пухăвĕсенче Узбек ССРеспубликĕн Верховнăй Совет депутатне суйлама кандидатсене Сталин, Молăтăв, Каганович, Ворошилăв, Микоян, Йежов, Димитров йулташсене, Узбекистан К(б)П Тĕпком çекретарĕсене Усман Йусупăв тата Йакăвлев йулташсене, Узбекистан Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председательне Йулдаш Ахунбабайĕва тăратнă.

(ТАСС).

Профсоюзсем—Союзлă тата автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсен суйлавĕ умĕн

Профсоюзсен Пĕтĕм Союзри Тĕп Совечĕн президиумĕ профсоюзсен Тĕпкомĕсене, хапрăксемпе савăтсенчи тата вырăнсенчи комитетсене пур предприйатисенче, учреждениcенче, клубсенче, хĕрлĕ кĕтессенче, обшежитисемпе пухăнмали çуртсенче Союзлă республикăсен Конституцине, союзлă тата автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсене суйламалли Положенисене вĕренес тĕлĕшпе политикăлă-массăлă ĕçе анлăн туса пыма хушнă.

Хуласемпе йалсенче политикăлă-массăлă ĕçе туса пыма профсоюзсен агитатăрсемпе пропагандиссен кадрĕсене, ССР Союзĕн Верховнăй Советне суйламалли суйлав кампани вăхăтĕнче хăйсене кăтартнă агитатăрсемпе пропагандиссене йавăçтармала, вĕсен ретне профсоюзăн политика тĕлĕшĕнчен ӳсне активĕнчи хатĕрленсе çитнĕ йулташсене хутшăнтармала.

Профсоюз организацийĕсен суйлавçăсен спискисене тăвас çĕрте депутатсен совечĕсене пур майпа та пулăшмала, ĕççыннисем тăратнă тата округсенчи суйлав комиççисем регистрациленĕ коммунисемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн большевикла агитацине анлăн сарса йамала.

Профсоюз организацийĕсен политикăла-воспитанилĕ тата организацилĕ-массăлă пĕтĕм ĕçĕ союзла тата автономлă республикăсен Верховнăй Совет суйлавĕсенче коммуниссемпе партире тăманисен блокĕ çĕнĕрен чаплă çĕнтерӳсем тăвассишĕн кĕрешес йенпе пулса пымала.

(ТАСС).

Наградăсем панă

ССР Союзĕн Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕпе 1937 çулта Парижре пулнă пĕтĕм тĕнчери выставкăри совет павильонне тунă çĕрте ĕçленĕ работниксене наградăсем панă.

Павильон автăрне Б. М. Иофан архитектăра тата В. И. Мухин скульптăра Ĕçлĕх Хĕрлĕ йалав орденĕпе наградăланă. 4 çынна „Знак почета" орденĕпе, 5 çынна ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕн хисеплĕ граматипе наградăланă.

(ТАСС).

Мускаври районсенчи партконференцисем

Майăн 9-мĕшĕнче Мускавра Сталинск, Бауманск, Сокольнически районсен районри партконференцийĕсем уçăлнă.

Сталински районри большевиксен конференцинче ĕç тăвакан сасăпа 500 делегат тата канашлакан сасăпа 130 делегат пухăннă. Делегатсем хисеплĕ президиума ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн Сталин йулташ йертсе пыракан политбюрone пысăк хавхаланупа суйланă.

Парторганизаци районри партконференцине сылтăмла-троцкисла шпионсемпе, сатăрçăсемпе, диверсантсемпе — Йапоние Германи фашисчĕсен агентурипе хайарăн кĕрешсе çирĕпленнипе кĕтсе илнĕ. Районри большевиксем сыхăлăха ӳстернĕ, тăшмана тупма, пулласа илме вĕреннĕ.

Районри парторганизаци ССР Союзĕн Верховнăй Советне суйламалли суйлав кампанийĕ вăхăтĕнче агитацилĕ-массăлă ĕçе пысăккăн сарса пынă. Çав ĕçе пиллĕк пин агитатăр ытла йавăçтарнă, вĕсенчен 1.600-шĕ—партире тăманнисем. Районри большевиксем совет халăхĕн пĕрремĕш кандидачĕшĕн — Сталин йулташшăн сасăлама тивĕçлĕ пулнипе мухтанаççĕ. Суйлав урнисем патне суйлавçăсен 99,9 процент пынă. Сасăсене 100 процентĕнех Сталин йулташшăн панă.

Пухусенчи прейисенче 2.400 çын, йе пухура пулнисенчен 30 процент, тухса каланă. 223 йулташа партин йертсе пырас ĕçне малтанхи хут суйланă.

Сокольнически районри конференцине ĕç тăвакан сасăпа 376 делегат тата канашлакан сасăпа 108 делегат пухăннă. Партин районри организацийĕ, хăйĕн ретне троцкисла-бухаринла кайашсенчен, шпионсемпе диверсантсенчен тасатса, йертсе пырас ĕçе çĕнĕ кадрсене хастарлăн туса пынă. Пĕр çул хушшинче партилĕ, хуçалăх тата совет ĕçне çĕнĕ кадрсем 450 çын лартнă. Çав вăхăт хушшинчех парти членне тата кандидатне районĕпе 754 çынна илнĕ.

(ТАСС).

Суйлав кампани пуçланнă йатпа

Пайан строительсен клубĕн пахчинче РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлав кампанине хисеплесе Шверник йачĕпе массăлă крос (чупу) пулат. Кроса пурĕ 1500 физкультурник хутшăнаççĕ.

Шверник йачĕпе кашни çулах крос туса иртереççĕ. Кăçалхи кроса физкультурниксем ытти çулхисенчен нумай хутшăнаççĕ.

Крос пуçланас умĕн—12 сехетре суйлав кампани пуçланнă йатпа Шупашкар хулинчи ĕççыннисен митингĕ пулат. Митингра ССР Союзĕн Верховнăй Совет депутачĕ П. Д. Краснов йулташ сăмах тухса калат. Крос икĕ сехет хушши, 13 сехетрен пуçласа 15 сехетчен, пырат.

Крос пĕтнĕ хыççăн пахчара шахмăт, шашкă, биллиард, домино вăййисем, ташă, тĕрлĕ вăйăсем пулаççĕ. Пахчара тĕрлĕ таварсем сутакан киосксем, тĕрлĕ ыйтусене ăнлантарса паракан консультацисем пулаççĕ.

ПАРТИ ПУРНӐҪӖ

Райком ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсем

Вӑрнар райкомӗ пуҫламӑш парторганизацисенче, кандидатсен групписенче, пӗчӗк коммуниссен пухӑвӗсенче хӑйӗн ӗҫӗсем ҫинчен отчотсем туса панӑ. Пухусем активлӑ иртнӗ, пренире 70 процентран пуҫласа 100 процента ҫитиччен тухса каланӑ. Коммуниссем райком отчотӗ тӑрӑх большевикла критикӑла самокритикӑна вӑйлӑн сарнӑ. Вӗсем партиллӗ-политикӑлӑ ӗҫе вӑйлатас тӗлӗшпе райком ҫителӗксӗр ӗҫленине, уйрӑмах райком инструкторӗсем пуҫламӑш парторганизацисене, пӗчӗк коммуниссене ҫителӗклӗ пулӑшманнине палӑртнӑ.

Парти райкомӗ парти вӗрентӗвӗпе йертсе пымании ҫинчен райӗҫтӑвком ҫумӗнчи Краснов парторг ака, мӗн калат: „Парти райкомӗ парти вӗрентӗвӗпе ҫителӗклӗ йертсе пыман. Ҫавӑнпа та кружоксем начар ӗҫлеҫҫӗ. Кашни ҫулах программа тӑрӑх пӗрремӗш темӑран вӗренме тытӑнаҫҫӗ, анчах пӗр ҫул та вӗренсе пӗтермеҫҫӗ". Чылай кружоксенче занятисем пулмаҫҫӗ, пулсан та, йеркеле иртмеҫҫӗ. Мӗншӗн тесен, коммуниссем хатӗрленсе пымаҫҫӗ. Районри парторганизацинче парти вӗрентӗвне хутшӑнтарман коммуниссем те сахал мар.

— МТС ҫумӗнчи пуҫламӑш парторганизацинче 3 коммуниса парти вӗрентӗвне хутшӑнтарман, — тет Храмкин йулташ.

— Кашни коммунисӑн учебник пулмала, учебниксӗр вӗренме те май ҫук. Парти историне вӗренме учебниксем ҫитмеҫҫӗ. Парти райкомӗ те ку тӗлӗшпе кирлӗ пек ӗҫлемен-йышӑнмасть, — тенӗ „Волонтӗр" колхозри Трофимав коммунис.

Райком инструкторӗсем парторганизацисенче сахал пулаҫҫӗ. Коммуниссене вӗренме, ӗҫлеме пулӑшассипе сахал ӗҫлеҫҫӗ. „Райком инструкторӗсем хӑйсен обйазаннӑҫӗсем ҫинчен манса кайаҫҫӗ. Парти пуҫламӑш организацисен ӗҫӗсемпе интересленмеҫҫӗ, вӗсене кирлӗ пулӑшу памаҫҫӗ", — тесе калат Зайцев коммунис.

ССР Союзӗн Верховнӑй Советне суйланӑ вӑхӑтра политикӑлла агитаци ӗҫне лайӑх лартнӑ пулсан, халӗ ку ӗҫе вӑйсӑрлатни палӑрат. Ҫак пысӑк ӗҫпе парти райкомӗ ҫителӗксӗр йертсе пырат. Хальхи вӑхӑтра районра РСФСР тата ЧАССР Верховнӑй Совечӗсене суйламали Положенисене вӗренеҫҫӗ. Агитатӑрсем умне темӗн чухлӗ ҫӗнӗ ыйтусем тухса тӑраҫҫӗ. Вӗсене вӑхӑтра пулӑшни кирлӗ.

Пуҫламӑш парторганизацисенчи агитколлективсем ҫителӗксӗр ӗҫлеҫҫӗ. Агитатӑрсемпе кирлӗ пек ҫеминарсем туса иртерни ҫук.

Пуҫламӑш парторганизацисенчи отчотпа суйлав пухӑвӗсене план тӑрӑх туса иртерни. Чылай парти организацинче отчотпа суйлав пухӑвӗсем питӗ активлӑ иртнӗ. Ҫав вӑхӑтрах хӑшпӗр парторганизацисенче суйлава хатӗрленмен пирки, пухусене палӑртнӑ куй туса иртеймен. Транспарт тата фосфорит тавӑчӗ ҫумӗнчи парторганизацисенче коммуниссен пухусене пухӑнман пирки, отчотпа суйлав пухӑвӗсене тепӗр куна куҫарма тивнӗ. Йершанус йалсоветӗнчи парторганизацинче парторга суйлана вӑхӑтра парти уставне пӑснӑ, ҫавӑн пирки суйлава иккемӗш хут иртерме тивнӗ. Ку йанаша парти райкомӗ вӑхӑтра тӳрлетнӗ.

П. В.

Критиклене хыҫҫӑн

Партин Шӑхасан районӗнчи пуҫламӑш организацисен пухӑвӗсем активлӑн иртнӗ. Пренире тухса калакансем парторгсен ӗҫне хытӑ критиклене, уйрӑмах МТС ҫумӗнчи парторганизацинче критикӑпа самокритикӑ вӑйлӑ пулнӑ. Мӗншӗн тесен, кунти парторг Толмачов партиллӗ-политикӑлӑ ӗҫе кирлӗ пек йеркелемен. Кунта парторг айӑпне темиҫе хутах парти вӗрентӗвӗн занятисене туса иртермен. Парторг хӑй трактарисен политкружокне йертсе пырат. Занятисем пуласси ҫинчен трактарисене пӗлтерет те хӑй занйатине пымасть.

Коммуниссем парти райкомӗн ӗҫне те хытӑ критиклене. Ку критика уйрӑмах райком инструкторӗсене тивет. Вӗсем партин пуҫламӑш организацисене партилле-политикӑлла ӗҫе лайӑхлатас тӗлӗшпе сахал пулӑшнӑ.

Парти организацинче отчотпа суйлав пухӑвӗсене иртерни хыҫҫӑн, парти пуҫламӑш организацисем лайӑхрах ӗҫлеме тытӑнчӗҫ. Партилле-политикӑлла ӗҫ вӑйланче, уйрӑмах партие илес ӗҫ лайӑланче. Хальхи вӑхӑтра партие илес тӗлӗшпе ӗҫлемен организацисем ҫук. Кашни парторганизацинех парти ретне ҫӗнӗ членсем илнӗ. Апрел уйӑхӗнче кӑна 16 ҫынна парти ретне илнӗ.

Массӑлӑ ӗҫре

Пантӑкри (Хӗрлӗ Чутай р.) Молотӑв йачӗпе тӑракан колхоз ҫумӗнчи комсомол организацийӗ халӑх хушшинче политикӑлла агитаци ӗҫне лайӑх туса пырат.

Колхозри кашни бригадӑра комсомолецсем агитатӑрсем пулса активлӑ ӗҫлеҫҫӗ. Кружоксенче тата уй-хире тухса, каннӑ вӑхӑтра РСФСР тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗсене суйламали Положенисене ӑнлантарса параҫҫӗ. Кунпа пӗрлех тӗнчери лару-тӑру ҫинчен вуласа параҫҫӗ. Ака, илер Кузнецова учительница. Вӑл уй-хирте колхозниксем каннӑ вӑхӑтра 5 хут занйати иртерне.

Комсомол организацийӗ йалти ҫамрӑксенчен драмкружок организациленӗ. Драмкружок аван ӗҫлесе пырат. Кашни ернере вечер пулса иртет. Вечерсем умӗн докладсем пулаҫҫӗ. Ку ӗҫре йалти учителсем тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем йалти ҫамрӑксене политикӑлла пӗлӗве ӳстерме пулӑшса пыраҫҫӗ.

Комсомол организацийӗ Пантӑк ҫамрӑксен хушшинче лайӑх ӗҫлесе пынипе комсомолецсен йышӗ 1937 ҫулхинчен 5 хут ӳснӗ. Иртнӗ ҫулта комсомол организацинче 4 комсомолец анчах пулнӑ пулсан, халӗ 25 комсомолеца ҫитрӗ. Вӗсенчен 10 хӗрача.

Ал. Максимӑв.

Суйлав пухӑвӗсенче

Трак районӗнчи чылай пуҫламӑш организацисен пухӑвӗсене коммуниссем 100 проценчӗпех пухӑннӑ. Пренире тухса калаҫакансен хисепӗ те 85 процента ҫитет.

Райком отчотӗ тӑрӑх тухса калаҫакан йулташсем райком пӗчӗк коммуниссене начар ӗҫлени ҫинчен асӑрхаттарса хӑварчӗҫ. Ҫавнашкалах райком парти ӗҫне начарлатни ҫав майпа хуҫалӑхла тата совет организацийӗсем вырӑнне ӗҫлесе пынине хытӑ тишкерчӗҫ. Райком отчотӗ тӑрӑх тухса калаҫакансем МТС-не тата кирпӗч савӑчӗн строительствине йертсе пырассипе парти организацине ӳстерессине те ҫителӗксӗр ӗҫленине палӑртрӗҫ.

Парти вӗренӗвне те тӗплӗн йеркелемен. Районта парти активне вӗренме пӗр кружок кӑна организациленӗ.

Ҫак кружокра 22 коммунис, вӗсем пӗлӳ тӗлӗшӗнчен пӗр пек мар. Хӑшӗсем аслӑ шкул пӗтернӗ, ҫав хушӑрах тӑватӑ ҫул вӗреннисем те пур. Ҫавӑнпа вара вӗренӳ пахалӑхӗ начар. Нумай вӗренме коммуниссен занйатине хатӗрленмесӗрех пыраҫҫӗ. Пропагандиссене ҫулталаса хушшинче темиҫе хутчен улӑштараҫҫӗ.

Райком парторганизацисемпе ҫителӗксӗр йертсе пыни ҫакӑнтан аван курӑнат. Ултӑ организацирен пилӗкӗшӗн ӗҫне начар тесе йышӑннӑ, суйлавра ӗлӗкхи парторгсенчен райӗҫтӑвком ҫумӗнчи организацин парторгӗ кӑна суйланнӑ, ытти организацисенче парторга ҫӗнӗ йулташсене суйласа хӑварнӑ.

Шалти ӗҫсен Халӑх Комиссариачӗн районри уйрӑмӗ ҫумӗнчи парторганизаци йулашки вӑхӑтра икӗ уйӑх хушши пӗр пуху та туса иртермен. Райкомри пуҫламӑш организацисенче те коммуниссен пухӑвӗсене пухса палӑртнӑ вӑхӑтра иртерме май пулман. Ҫаксем пурте райком пухусене вӑхӑтра иртерессине маннине кӑтартаҫҫӗ.

Ҫамрӑксем хушшинче

Тӗнчери лару-тӑру ҫинчен ӑнлантараҫҫӗ. Тутаркас районӗнчи Ворошилав йачӗпе тӑракан колхозра ҫамрӑксен пухӑвӗсем пулса иртеҫҫӗ. Пухусенче тӗнчери лару-тӑрусем ҫинчен, Испани халӑхӗ фашисӑма тата Германипе Итали интервенчӗсене хирӗҫ паттӑррӑн кӗрешни ҫинчен, Китай ҫарӗн пысӑк ҫӗнтерӗвӗсем ҫинчен, Австрири лару-тӑру ҫинчен ӑнлантараҫҫӗ.

К. Пушкин.

ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: Кӗҫӗн командирсем отличник-артилериссем (Мускав ҫар округӗнчи №-чӗ чаҫӗ) С. С. Долуденко тата Д. Г. Грйадунов йулташсем танк ҫине тупӑпа пеме палӑртса отчотлӑ картӑчка хатӗрлеҫҫӗ.

Н. Савелйӗв фото-ӳкерчӗкӗ (Сойузфото).

Суйлав комиҫҫисем ӗҫе тытӑнчӗҫ

ЙЕПРӖҪ. (Телефон тӑрӑх). Районра Чӑваш АССР Верховнӑй Советне суйлас тӗлӗшпе 4 округ комиҫҫийӗ ӗҫлет. Вӑл комиҫҫисенче хӑйсен ӗҫӗпе мухтава тухнӑ ҫынсем ӗҫлеҫҫӗ. Районри паллӑ опытник, „Правда" колхозри ватӑ колхозник Клементйӗв йул. Йепреҫ суйлав округ комиҫҫи членӗ. Вӑйлӑ тырпул звеновочӗ, „Молния" колхоз членӗ Кантукова Дарийа, Телемкасси суйлав округӗн комиҫҫи членӗ пулса ӗҫлет. Нумайах та пулмасть Верховнӑй Совет суйлавне хатӗрленес ыйтупа округсенчи суйлав комиҫҫи членӗсен тата йалсоветпа колхоз председателӗсен канашлавӗсем пулса иртрӗҫ. Ҫавӑн пекех суйлавҫӑсен списксене тӑвас ыйтупа йатарласа йалсовет ҫекретарӗсен канашлуне иртерне.

Майӑн 9-мӗшӗнче Йепреҫ суйлав округ комиҫҫи 1-мӗш ларӑвӗ пулчӗ. Унта организацилле ыйтусене сӳтсе йаврӗҫ.

РСФСР тата ЧАССР Верховнӑй совечӗсене суйлама хатӗрленнӗ май, районсенче суйлав саккуне вӗренессине анлӑн сарса пыраҫҫӗ. Тӑманлӑ Выҫлире 505 суйлавҫӑран Положенине 403 ҫын вӗренет. Хиртимӑратра 228 ҫын вӗренет. Кунта уйрӑмах Прокопйӗвпа Кузнецов агитатӑрсем лайӑх ӗҫлеҫҫӗ. Тури Клешкасси йалсоветӗнче суйлав саккуне 300 ҫын вӗренеҫҫӗ. Кунта Сталинла Конституципе суйлав йӗрки ҫинчен 7 лекци иртерне.

Колхозниксемпе рабочисем хушшинче суйлав саккуне вӗренес ӗҫе лайӑх йеркелене. Ҫав вӑхӑтрах чылай йалсоветсенче йединоличниксене Суйлав Положенипе паллаштарас ӗҫе манса хӑварнӑ. Райӗҫтӑвком президиумӗ районӗпе 36 суйлав участки тума палӑртнӑ. Вӑл шутра 32-шӗнче телефон пулать. Округсенчи комиҫҫисенче пуринче те телефонсем лартнӑ, сургсем тупнӑ, халӗ суйлав комиҫҫи ҫурчӗсене илемлетеҫҫӗ.

Анчах почтӑра ӗҫлекенсем ҫак ӗҫре хӑйсене тивекен ответлӑха туйса илеймен. Почта уйрӑмӗнчи дежурнӑй телефониссем час ответлемеҫҫӗ.

Районри комсомол организаци суйлав саккуне суйлавҫӑсене ӑнлантарса парас ӗҫе начар хутшӑнать. Ҫтена хаҫачӗсем те ку ӗҫе хутшӑнман-ха.

Митрофанав.

Ӗҫе вӑйлатмала

ПАТӐРЙЕЛ, майӑн 10-мӗшӗ (телефон тӑрӑх). Майӑн 9-мӗшӗнче РСФСР тата ЧАССР Верховнӑй Совечӗсене суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен округсенчи суйлав комиҫҫи председателӗсемпе ҫекретарӗсен канашлавӗ пулчӗ. Канашлура 6 районран райӗҫтӑвком председателӗсемпе ҫекретарӗсем те пулчӗҫ. Канашлура Чӑваш АССР Верховнӑй Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен Тӗп Суйлав Комиҫҫи председателӗн замеҫтителӗ Терентйӗв йулташ округсенчи суйлав комиҫҫисем умӗнче тӑракан ӗҫсем ҫинчен доклад туса пачӗ. Тата Канашлура РСФСР Верховнӑй Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен Патӑрйел округӗн суйлав комиҫҫи председателӗ Ҫтепанӑв, унӑн замеҫтителӗ Каштанавӑ, Патӑрйел райӗҫтӑвком председателӗ—ССР Сойузӗн Верховнӑй Совет депутачӗ—Харитонӑвӑ, Шӑнкӑртам райӗҫтӑвком председателӗ Сайфулин йулташсем тухса каларӗҫ. Вӗсем вырӑнсенче суйлава хатӗрленес ӗҫ мӗнле пыни ҫинчен каласа пачӗҫ.

Чӑваш Тӗпӗҫтӑвкомӗн председателӗ—ССР Сойузӗн Верховнӑй Совет депутачӗ З. А. Андрейӗва йулташ хӑйӗн сӑмахӗнче райӗҫтӑвком председателӗсем вырӑнсенче сахал пулни, йалсоветсене суйлава хатӗрленес тӗлӗшпе ҫителӗксӗр пулӑшни, йалсенчи вулав ҫурчӗсем начар ӗҫлени, йединоличниксемпе ӗҫлеменни, суту-илӳ организацийӗсем суйлав литературине ҫителӗклӗ кӳрсе килменни ҫинчен тата ҫав ҫитменлӗхсене халех пӗтерме кирли ҫинчен каларӗ. Малала вӑл ССР Сойузӗн Верховнӑй Совет суйлавӗ чухнехи паха опытсемпе лайӑх усӑ курса, РСФСР тата ЧАССР Верховнӑй Совечӗсен суйлавне лайӑх хатӗрленсе, суйлавсене тата лайӑхрах та организацилӗрех иртересси ҫинчен ӑнлантарса пачӗ.

Канашлу Йелчӗк районӗнче суйлав Положенине вӗренес ӗҫе начар организациленине, Патӑрйел районӗнче ҫитӗннисене хут вӗрентес ӗҫ йапӑх пулса пынине палӑртрӗ.

Н. Пушкин.

Агитатӑрсен районри канашлавӗ

ПАТӐРЙЕЛ. Майӑн 10-мӗш (телефон тӑрӑх). РСФСР тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗсен суйлавне хатӗрленес ыйтупа агитатӑрсен районри канашлавӗ пулса иртрӗ. Канашлура 100 агитатӑр ытла пулчӗҫ.

Канашлура тухса калаҫнӑ йулташсем районра хальхи вӑхӑтра агитацилӗ-массӑлӑ ӗҫ ҫителӗксӗр сарӑлса пынине кӑтартрӗҫ. Районӗпе суйлавҫӑсем 18 пин ҫынна йахӑн РСФСР тата ЧАССР Верховнӑй Совечӗсене суйламали Положенисемпе Конституцисене вӗренме 4 пин суйлавҫӑна ҫеҫ хутшӑнтарнӑ-ха. Кружоксем те начар ӗҫленине палӑртрӗҫ.

Агитатӑрсем агитацилӗ-массӑлӑ ӗҫе вӑйлатма обйазатӗлствӑсем илчӗҫ.

М. Митрофанӑв.

Чукунҫул ҫинчи рабочисен ӗҫ условине йусамала

(Курсант ҫырӑвӗ)

Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунҫул строитӗлствинче ӗҫ начар пыни строитӗлства управленинче ӗҫлекенсенчен килет. Вӗсем ҫитменлӗхсене кураҫҫӗ, анчах вӗсене пӗтерессишӗн кӗрешмеҫҫӗ.

Рабочисене вӑхӑтра укҫа парас, кану вӑхӑтне культурлӑ иртерес ыйтусене пайанхи куна та йӗркелемен. Кашни уйӑхрах укҫа парассине тӑсса пыраҫҫӗ. Март уйӑхӗшӗн ӗҫукҫи апрел уйӑхӗ вӗҫӗнче ҫеҫ пачӗҫ.

Пирӗн рабочисем вӑхӑта культурлӑ, лайӑх канса иртересшӗн. Лайӑх канни тухӑҫлӑ ӗҫлеме пулӑшать. Анчах кунта ӑна пурнӑҫламаҫҫӗ.

Нумайах та пулмасть строитӗлствӑ управленийӗ организациленӗ курсран 24 ҫын вӗренсе тухрӗҫ. Вӗсенчен 12-шӗ аслӑ кондукторсем пулма, 12-шӗ кондукторсем пулса ӗҫлеме тивӗҫ илчӗҫ. Вӗренсе тухсанах вӗсем чукунҫул управленипе догӑвӑр турӗҫ. Догӑвӑрта кӑтартнӑ тӑрӑх, хватер тата спецовкӑ памала. Анчах управлени догӑвӑрта кӑтартнисене пурнӑҫласа пымасть.

Ҫитменлӗхсем строитӗлствӑра сахал мар. Ҫитменлӗхсене уҫҫа парса айаплисене критиклесен вӑрҫса тӑкаҫҫӗ, йе вӑл ҫынна ӗҫрен кӑларса йама тӑрӑшаҫҫӗ. Акӑ тӗслӗх: комсомолец Левицкий йулташа йсӗрлӗхсене палӑртнӑшӑн тӗрлӗрен сӑлтавсем тупса ӗҫрен кӑларса йанӑ.

Ҫак ҫитменлӗхсем пулнӑ пирки те ӗнтӗ строитӗлствӑра ӗҫ питӗ вӑрахӑн пырать, ӗҫӗн пахалӑхӗ те ҫителӗксӗр.

К. Родионав.

Тӗнчери пӗтӗм халӑхсемшӗн нихҫан манми пример

(ИСПАНИРЕ)

„Территори ҫухалнӑ пулин те, халӑх ҫарне ҫӗнтермен, вӑл тӗреклӗ, унӑн хӗҫпӑшалӗ кашни кун нумайланать, наступлени тумалли майсем ӳссе пыраҫҫӗ, — тесе ҫырать хӑйӗн чӗнсе каланинче Каталонири пӗрлешӳлӗ социалисла парти. — Халӑха арминчен уйӑрма ҫук, Испани республикине никам та ҫӗнтерейместь. Халӑх ҫарне боецсем ҫӗршер пин ҫын хутшӑнса пыраҫҫӗ. Кун йӗркинчи лозунг — тӑшмана ҫӗнтермеле, ӑна хирӗҫ тӑмала. Тӑшмана хирӗҫ тӑни халӑх ҫарӗн речӗсене икшер хут ӳстерессе, промышлӗннӑҫ ӗҫне вӑйлатасси, тылра фашиҫсене тата тӑван ҫӗршыва сутакансене пӗтерессе пулать. Тӑшмана хирӗҫ тӑрассине пӗрлӗх тунипе ҫеҫ ӗҫе кӗртме пулать. Каталони хӗрӳлӗн калать: вӗсем килсе кӗреймеҫҫӗ!

Фашисӑма хирӗҫле халӑх фронтне пӗрлешнӗ Испани халӑхӗн, паттӑрлӑхӗ урса кайнӑ пӑлхавҫӑсене тата питӗ вӑйлӑ хӗҫпӑшалланнӑ Италипе Германи интервенчӗсене хирӗҫ пӗтӗм вӑйхала хурса тата йӑвӑр кӗрешнӗ ҫӗрте йар уҫҫӑн курӑнса тӑрать. Левантӑ фронтӗнче (Теруэлрен кӑнтӑр йенчен Вӑтаҫӗр тинӗс сыранне ҫитекен районта) икӗ ерне хушши ӗнтӗ кашни вершук ҫӗршӗн питӗ хайар кӗрешӳ пырат. Пӑлхавҫӑсемпе интервентсен хӗҫпӑшал республикӑ ҫарӗсенчи пек мар нумай. Республиканӗҫсем ҫирӗплетнӗ кашни позици ҫине вӗсем пиншер снарйад тата авиаци бомбисем пӑрахаҫҫӗ. Испанири фронтсенче ку тариччен пулман пек нумай хисеппе ҫар техники пырса тулнӑ пирки, „хутшӑнмала мар" политикипа кирлӗ хӗҫпӑшалсене сутӑн илме чарнӑ пирки, республиканӗҫсем кайала чакаҫҫӗ, анчах кайран штыксемпе, гранатӑсемпе контратакӑ туса, пӑлхавҫӑсемпе интервентсене вӗсем йышӑннӑ позицирен хӗссе кӑлараҫҫӗ.

Пӗтӗм ӗҫе чӗрӗ ҫынсем татса памала ҫӗрте, ҫӗнтерӳ йалан республиканӗҫсем йенче. Наступлени фашиссемшӗн питӗ хаклӑ ларать, йулашки кунсенче Левантӑра та, ҫавӑн пекех Ебро йухан шывӗ ҫинче те вӗсене малала кайма чарса лартнӑ.

* * *

Республиканӗҫсем хӑйсем ҫӗнтерессе шанса тӑраҫҫӗ, вӗсем ҫӗнтереҫҫӗ те. Республиканӗҫсем хӑйсем ҫирӗп шухӑшлӑ пулнипе, кашни чула, кашни йӑвӑҫа, хӑйсен Испани ҫӗрӗ ҫинчи кашни ҫурта крепӑҫ туса хӳракан боецсен паттӑрлӑхӗпе вӑйлӑ. Вӗсем демократилӗ Испанин, фашисӑма хирӗҫле Испанин никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн кӗрешеҫҫӗ.

Тӑшмансене хирӗҫ рабочисемпе пӗрле хресченсем кӗрешеҫҫӗ. Кайала чакнӑ чухне хресченсем хӑйсен аппӑшӗсем аслашшӗсем пурӑннӑ вырӑнсене пӑрахса кайаҫҫӗ. Вӗсем хӑйсен килйышӗсене республикӑ тылне йараҫҫӗ, хӑйсем тӑван ҫӗршыва сыхлакансен ретне йулаҫҫӗ.

Республикӑ тӑвиччен 7 ҫул кайала ҫӗр нумай тытакансем Испанири пӗтӗм ҫӗртен 44 процентне хӑйсен аллинче тытса тӑнӑ. Испанири пӗтӗм хресченсенчен ҫурринe йахӑннин пӗр татӑк ҫӗр те пулман. Ҫак ҫӗрсӗр хресченсем пурте йе батраксем, йе ӗмӗрлӗхех помешчиксен пусмӑрӗнче пурӑнакан крепостнойсем пулнӑ. Республикӑ хресченсене ҫӗр парать, фашисла пӑлхавҫӑсене пулӑшакан йе вӗсем майлӑ тӑракан помешчиксен ҫӗрӗсене туртса илет.

Фашиссем пырсанах, Испанин чухӑн хресченӗсем пурне те ҫухатаҫҫӗ, час-часах вӗсен пурнӑҫӗ те пӗтет.

Испанири хаҫат-журналсем фашиссем кӑнтӑр Испанири хресченсен, чухӑн хресченсен пӗтӗм ҫӗрӗсене туртса илни ҫинчен ҫырса пӗлтереҫҫӗ. Хресченсенчен туртса илнӗ ҫӗрсене пӑлхавҫӑсен влаҫӗсем Италипе Германи кулакӗсене-колонизатӑрӗсене параҫҫӗ, вӗсем, кулаксем-колонизатӑрсем, ҫӑмӑллӑн пуйас шутпа „ӗҫсӗр тӑрса йулнисен" йачӗпе пӗтӗм кӑнтӑр Испанине пырса тулнӑ.

Фашисла колонизатӑрсем алла револьвер тытса, чухӑн хресченсене хӑйсен ҫӗрӗсем ҫинчен хӑваласа йараҫҫӗ, хӑйсен ҫурчӗсенчен хӑваласа кӑлараҫҫӗ. Фашиссем йышӑнса илнӗ вырӑнтан фронт урлӑ каҫса республикӑ Испанине тарса пынӑ пӗр хресчен каласа панӑ тӑрӑх, Кӑнтӑр Испанири чухӑн хресченсен ҫӗрне фашисла колонизатӑрсем туртса илни ҫакӑн чухлӗ: Малага провинцинче — 234 пин гектар, Кордӑвӑ провинцинче — 180 пин гектар, Севилйа провинцинче — 245 пин гектар, Уельвӑ провинцинче — 120 пин гектар. Ґренада провинцинче „режимпа килӗшмен хресченсен" ҫӗрне 311 пин гектар туртса илнӗ, ҫак ҫӗр унччен 80.980 чухӑн хресчен аллинче пулнӑ. Кадикс провинцинче хресченсенчен 45.720 участкине туртса илнӗ, ҫак ҫӗр участкисем ҫинче 20.354 вак хуҫалӑхлӑ хресченсем ӗҫлесе пурӑннӑ.

Ҫӗр ҫинчен хӑваласа йанӑ чухӑн хресчен пурнӑҫӗ ҫинчен калама та кирлӗ мар: вӗсенчен пӗр пайне республиканӗҫсем майлӑ шухӑшлӑ тесе персе вӗлернӗ, нумайӑшӗ тӗрмесенче, концентрацилӗ лагӗрсенче лараҫҫӗ. Вӗсен ӗлӗк пӗчӗк татӑк ҫӗр ҫинче выҫӑ ларнӑ ҫемйисем халӗ нимӗнсӗр тӑрса йулнӑ, ҫапкаланаса ҫӳреҫҫӗ, выҫӑпа аптӑраса вилеҫҫӗ.

Ҫавӑнпа та фронт сывӑхӗнчен тарнӑ Каталони хресченӗн шухӑшне ӑнланма пулать, вӑл ҫапла каланӑ:

— Фашиссем йышӑнса илекен йала йуличчен, ӑҫта куҫ курать, ҫавӑнта кайни лайӑхрах. Епӗ хамӑн ҫемйене тыла илсе тухатӑп, хам фронта кайатӑп.

* * *

Фашисла интервентсем пӗтӗм Испанипе ҫынсене вӗлерсе ҫӳреҫҫӗ. Испанире пынӑ пӗр ҫулталӑк та 8 уйӑх хушшинчи вӑрҫӑра пӑлхавҫӑсен, Италипе Германи интервенчӗсен авиацийӗ республикӑлӑ Испани тылӗнчи хуласемпе йалсенче 10.699 ачана вӗлернӗ, 15.320 ачана амантнӑ. Испанире Германипе Итали летчикӗсем фашисӑмӑн тискер сан-питне кӑтартаҫҫӗ. Хӗвелтухӑҫ фронтӗнче фашиссем бомбӑ пӑрахман пӗр йал та йулман. Реус тата Торташ пек фронт сывӑхӗнчи хуласенче бомбӑ тивмен ҫуртсем питӗ сахал йулнӑ.

Нумай пулмасть фашисла авиаци кӗтмен ҫӗртен Толедӑ провинцинчи (Испани центрӗнче) темиҫе йал ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ. Ҫак йалсем стратеги тӗлӗшӗнчен нимӗн чухлӗ те вырӑн йышӑнса тӑман, вӗсем республикӑлӑ Испанин инҫетри тылӗнче пулнӑ. Ҫав йалсем ҫине бомбӑсем пӑрахнипе 5 хӗрарӑм тата 6 ача вилнӗ.

Ҫак кунсенче ҫеҫ Барҫелонӑри порта пулӑ тытакан паруслӑ кимӗ килнӗ. Унта пӗр пулӑҫӑ вилнине тата икӗ пулӑҫӑ суранланнине курнӑ. Вилнӗ ҫын 14 султа ҫеҫ пулнӑ. Фашисла самолет пулӑ тытакан ҫав кимӗне курсан, темиҫе хутчен айала анса пулеметпа пенӗ.

Фашиссен ҫакнашкал тискерлӗхне пӑхмасӑр, Испани халӑхӗ фашисӑма пӗтӗмпе ҫӗнтериччен кӗрешме хатӗр.

* * *

„Каталони республикӑлӑ Испанин ытти пайӗсемпе ҫыхӑнса тӑрассине татнипе республиканӗҫсен кӗрешӳри хӑватне пӗтерме шутласа тӑшман йанӑшрӗ, — тесе каланӑ Испани кортесӗсен (парламент) коммунисла депутачӗ Антонио Михе. — Испанири фашисӑма хирӗҫле массисен тӑшмана ҫӗнтерес шанчӑкне никам та хавшатма пултараймасть!"

Пӑлхавҫӑсемпе интервентсем кашни тӑваткӑл метр ҫӗре снарйадпа йе бомбӑпа шӑтара-шӑтара тинӗс хӗрне тухсан, правитӗлствӑ центӑрти тата кӑнтӑрти пӗтӗм хӗҫпӑшаллӑ вӑйсен главнокомандуйушчине лартнӑ Миаха генерал ҫапла каланӑ:

„Хальхи ӗҫсем лару-тӑрува нимӗн чухлӗ те улӑштармарӗҫ. Пирӗн тӑшмана хирӗҫ кӗрешме чи кирли пур, — пирӗн ҫынсем пур. Пирӗн ҫар промышлӗннӑҫӗ пулӑшнипе тӑшмана ҫӗнтерме пултаракан халӑх пур".

Пӳр вӑрҫӑра та чӗрӗ ҫынсем, организациленнӗ ҫынсем тӗп вырӑнта тӑраҫҫӗ. Испани республикӗн боецӗсен ӗҫӗшӗн тӗнчери пӗтӗм прогреҫҫивлӑ етемлӗх тӑрать. Испани республикӗ 7 ҫул тултарнӑ йатпа ҫырса, „Йуманите" хаҫатра пичетленӗ ҫырура Ромен Роллан ҫапла ҫырать:

„Испани республикӗ хӑйӗн йунӗпе Испани историне тата ирӗклӗхӗшӗн кӗрешес историне чи чаплӑ, мухтавлӑ страницӑсем ҫырса хучӗ. Вӑл Испани республикӗ, хӑйӗн никама пӑхӑнса тӑманлӑхӗшӗн кӗрешекен тӗнчери пур халӑхсене те мухтавлӑ пример парать. Ҫав вӑхӑтрах ҫак пример фашисӑма хирӗҫ кӗрешекен Испанине пулӑшма килӗшмен демократисене хумханса асӑрхаттарни пулать. Италипе Германи палачӗсене ӗмӗрлӗх намӑс. Халӗ мӗнле йӑвӑр пулсан та, епӗ пуласлӑха шанса тӑратӑп. Испанине пӑвса вӗлерес тесе пусмӑрлакансен усал вӑйӗсем темӗнле тӑрӑшсан та, Испани ҫӗрӗ ҫинче тӑшмансене тӗп тума никам тытса чарайми вӑйсем пуҫтарӑнаҫҫӗ. Ҫав вӑйсем варварсене ҫапса ҫӗмӗрӗҫ!"

Ив. Н.

Ӑнлантару ӗҫӗ ҫителексӗр

Шӑмӑршӑ районӗнчи сывлӑх пайӗ пульница тата акушерка пункчӗсен ӗҫӗсемпе интересленмест, вӗсене ӗҫре пулӑшмасть. Районра пӗр фельдшер пункчӗ, тепӗр акушерка пункчӗ ӗҫсӗр ларнӑ.

Иртнӗ ҫулта Шӑмӑршӑра ача ҫуратмали ҫурт лартрӗҫ. Ҫурт таса, илемлӗ. Унта 3 акушерка. Анчах вӗсен ӗҫӗ курӑнмасть-ха. Йалсене тухмаҫҫӗ, хӗрарӑмсене пульницӑра ача ҫуратмин усси ҫинчен каласа ӑнлантармаҫҫӗ. Ҫавна пула та пульницӑна йалтан ача ҫуратма сахал пыраҫҫӗ.

Шӑмӑршӑри пульницӑ та начар ӗҫлет. Укҫин фельдшер чирлӗ ҫынсене йӗркелӗ пӑхмасть, унта ытти ҫитменлӗхсем те пур.

Чамейӑв.

Пĕтĕм Союзри Йалхуçалăх выставкин „Тĕштырă" павилйонĕ тата выставкăн зонала павилйонĕсене пулма кĕртнĕ кандидатсен 1-мĕш номĕрлĕ спискĕ*)

Пĕтĕм Союзри Йалхуçалăх выставкин комитечĕ 1938 çулти апрелĕн 7-мĕшĕнче пулнă ларăвĕнче Пĕтĕм Союзри Йалхуçалăх выставкин „Тĕштырă" тата зонала павилйонсем тăрăх пулма пĕрремĕш номерлĕ спискăн кандидачĕсене çирĕплетнĕ. Çав ларура çирĕплетнĕ кандидатсен хисепĕнче Чăваш республикĕнчен 271 колхоз.

Пĕтĕмпе малтан çирĕплетнисемпе пĕрле 369 колхоз шутланать.

Выставкăра пулма пур тĕштырăсем тăрăх та пĕтĕм лаптăкран вăтам хисеппе кашни гектар пуçне 15 центнĕртан кайа мар илнисем пултараççĕ.

Йĕркелĕ №	Пĕтĕм Союзри Йалхуçалăх выставкинче пулма çирĕплетнĕ кандидатсем	Тĕштырă акнă лаптăк—гектарпа	1937 çулта колхоз вăтам хисеппе пĕр гектартан илнĕ тухăç
99.	Сталин йачĕпе тăракан колхоз, Вăрнар р-нĕ	541	27,0
100.	„Ново-Ищеряково" колхоз, Йелчĕк р-нĕ	168	24,9
101.	„Первомайск" колхоз, Патăрйел р-нĕ	563	23,2
102.	„КИМ" колхоз, Йелчĕк районĕ	535	22,9
